Çын тата саккун

# Хĕç-пăшал ача вăййи мар

Патак та çулталăкра пĕрре перет, теççĕ халăхра. Енчен те сирĕн граната, тротил шашки е çавнашкал ытти япаласем пулсан, çаксем хăçан та пулин хăйсен ĕçне пурнăçлаççех. Чылайăшĕ астăвать пулĕ, çакăн йышши тĕслĕх Муркаш районĕнчи Ятман ялĕнче те пулса иртнĕччĕ, телее, сусранланнисем пулман.

2005 çулхи июль уйăхĕнче Ятман ялĕнчи 1987 çулта çуралнă Константин Анатольевич Иванов магазин çумĕнчи вăрман лаптăкне çӳпĕçапă пăрахма каять. Унта пĕр хутаç тупать. Хутаçра тротил шашки, электродетонатор, РГД-5 осколкăллă граната, имитациллĕ запал пулнă. Çакăн чухлĕ кĕтменлĕх ăна питĕ кăсăклантарнă. Тупнă хĕç-пăшал обществăшăн хăрушлăх кăларса тăратасса ăнланнă пулин те, вĕсене хăйĕнчен вĕçертмен, ашшĕ-амăш хуçалăхне илсе кайнă, саккуна пăсса декабрĕн 16-мĕшĕччен усранă. Хальхинче вара хĕç-пăшала ялти Культура çурчĕн котельнăйне илсе çитернĕ, çĕр айне чавса пытарнă. Кунта апрель уйăхĕччен выртнă, анчах та граната тутăхма пуçланă. Халĕ ĕнтĕ канăçа çухатнă яш хĕç-пăшала Культура çурчĕ çывăхĕнчи сарай карнизне михĕ ăшне хурать.

Пĕррехинче çак сарайĕнче ачасем выляççĕ, унти хăмасене кăлараççĕ. Халĕ вара михĕ ачасен куçĕ умне пулать. Михĕре икĕ чăмăр, патак евĕр тата тăваткал япаласене асăрхаççĕ. Пĕрне алла илнĕ хушăра ыттисем ăнсăртран тĕрлĕ еннелле кусса каяççĕ. Ахальтен каламаççĕ ĕнтĕ, ача ăс-тăнĕнче çĕр тĕрлĕ ыйту тесе, вĕсен пĕтĕмпех пĕлмелле. Ку хутĕнче те чăмăр япалан тупсăмне пĕлес тесе пĕри урамалла ыткăнать. Унта вара В.Ю. Терентьева тĕл пулать, чăмăрскерне хăй çумне илет. Халĕ ĕнтĕ В.Ю. Терентьева чăмăр япала сирпĕннипе сирпĕнменни кăсăклантарать. Чăмăрскерне çырманалла ывăтать те 2-3 утăм аякалла утма ĕлкĕрет. Çапла вара урамра сасă хыттăн янăрать, çырма самантрах тĕтĕмпе тулать. Халĕ ĕнтĕ кăсăкланакансем чăмăр япала мĕн пулнине ăнланчĕç тинех.

Эксперт пĕтĕмлетĕвĕ тупнă япаласем хĕç-пăшал пулнине çирĕплетет. К.А. Иванов тунă преступлени вăтам йывăрăшлă преступлени шутне кĕрет. Вăл хăйĕн айăпне йышăнать тата ӳкĕнет. Çапла вара ăна суд икĕ çулталăк та виçĕ уйăх ирĕкрен хăтармалла, çак вăхăта колони-поселенире ирттермелле тăвать.

Акă ăçта илсе çитерчĕ те ĕнтĕ хĕç-пăшала пытарса усрани тата ун çинчен çийĕнчех тивĕçлĕ органсене пĕлтерменни.

**А. КАБУРКИН,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн следстви уйрăмĕн аслă следователĕ, юстици аслă лейтенанчĕ.**

Милици хроники

## Пĕр-пĕрне инкекре хăварар мар

Çул-йĕр çинче тĕрлĕрен инкек-синкек пулма пултарать. Палланă çын-и вăл е пĕрремĕш кăна курнă-и ăна, пурпĕрех çынлăха çухатмалла мар, инкеке лекекене май пур таран пулăшмалла. Аяларах асăннă пăтăрмахра вара пачах урăхла пулса тухнă. Августăн 15-мĕшĕнче 23 сехетре Муркаш салин Заводская урамĕнче пурăнакан яш ОС 8410 90 регистраци номерлĕ ВАЗ 2105 автомашинăпа Автанкасси-Муркаш–Козьмодемьянск автоçулпа пынă. 19 çулхискерĕн автомашинăпа çӳремелли ирĕк пулман. Пĕрре мар судпа айăпланнăскер, ку хутĕнче урăх çын машинипе пулнă. Çеменкасси ялĕ çывăхĕнче çуран утакан 38 çулхи арçынна машинăпа пырса çапать. Çитменнине тата вăл инкек тӳсекене пулăшмасть, çийĕнчех тарса çухалать. Йывăр суранланнăскерне тĕп больницăн реанимаци уйрăмне илсе çитерме тивет.

## Пурнăçран уйрăлнă

Катькас-Пушкар автоçула тунă çĕрте "Дорсервис" ООО транспорчĕсем ĕçленĕ. Августăн 13-мĕшĕнче 16 сехетсенче мотокатокпа ĕçлекен 66 çулхи арçын руле вăхăтра тытса ĕлкĕреймен, мотокаток кювета ӳпĕннĕ. Унта ĕçлекен арçын, йывăр суранланнăскер, инкек вырăнĕнчех вилнĕ.

## Саккун çирĕп ыйтать

Саккун пуринчен те çирĕп ыйтать. Тĕрĕс мар çулпа пыракана наччасрах тăрă шыв çине кăларать. Акă "Передовик" хуçалăхра 2000 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 2007 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕччен хуçалăх ĕçченĕ саккуна пăсса ĕçленĕ. Раççей Федерацийĕн Федераллă саккунĕн 9 статйипе килĕшӳллĕн унăн ĕçлемелле пулман, мĕншĕн тесен Пенси Фончĕн управленийĕнчен ятарлă пенси илсе тăнă. Вăл илнĕ пенси калăпăшĕ 81 пин те 847 тенкĕне çитнĕ. Халĕ ку ĕç пирки сентябрĕн 9-мĕшĕнче РФ УК 159 ст. 1 пайĕпе 8959 номерлĕ уголовнăй ĕç пуçарнă.

## Çынпа çын пек пуласчĕ

Çынлăха çухатнă çынсен йышĕ çумăр хыççăнхи кăмпа евĕрех хунаса пырать. Тăтăшах хĕнени, çапăçни пирки илтме тӳр килет.

Акă Çĕньял Очăкасси ялĕнчи Учительсен урамĕнче пурăнакан 29 çулхи яш хăйĕн амăшĕпе хирĕçӳ кăларать. 49 çулхискерне монтировкăпа хĕнет. Йывăр суранланнăскерне вара больницăна илсе çитерме тивет.

Тепĕр пӳтсĕрле хăтланăва та асăнар. Йӳçкассси ял тăрăхĕнчи Актай ялĕ çывăхĕнчи хирте 1964 çулта çуралнă арçын хăйне паттăр-йĕкĕт пек туйнă пулас, ытла та пуçтахла хăтланнă-çке. Ниçта та ĕçлеменскер, хăйсен ялĕнче пурăнакан хĕрарăмпа хирĕçӳ кăларать. Ăна алăпа, урапа, ку çеç те мар, лаша тилхепипе хĕнет. Çакăн хыççăн 43 çулхискер, паллах, çын тата арçын ятне пачах тивĕç мар-çке. Енчен те çавăн йышши пӳтсĕрсем хунасах пырсан, мĕн патне пырса тухăпăр-ши?

## Ан тив, ӳстĕрех ешĕл йывăç?

Акă ĕнтĕ йывăç лартас уйăхлăх пырать. Апла пулсан пирĕн пĕр тăхтаса тăмасăр май килнĕ таран ытларах йывăç хунавĕсем лартма тăрăшмалла. Лартнăскерсене вара кулленех тимлĕх кирлĕ. Ӳссе çитсен вара вĕсем тавралăхăн чăн-чăн илемĕ пулĕç.

Акă шалти ĕçсен пайĕн дежурнăй уйрăмне вара кӳрентерекен шăнкăрав килчĕ. Патшалăх унитарлă «Опытлă вăрман хуçалăхĕн», Ильинка лесничествин тăххăрмĕш лаптăкĕнче çут çанталăк тăшманĕсем сунара тухнă. Çак лаптăк Ивановка тата Коминтерн выççăлкки ялĕсем çывăхĕнче шутланать. Çавăнтан ӳсекен 152 тĕп йывăçа касса кайнă. Сăтăрçăсем çӳлерех асăннă хуçалăха 546083 тенкĕлĕх сиен кăтартнă. Халĕ çут çанталăк тăшманĕсем тĕлĕшпе РФ УК 260 ст. 2 пайĕпе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

## Ют çын пурлăхĕ мĕншĕн ытла илĕртет-ши?

Сентябрĕн 10-мĕшĕнче 24 сехетре Муркаш салинчи Чапаев урамĕнчи 20 çулхи яш çын пурлăхне хапсăнма шутланă. А 783 ВТ 21 РУС регистраци номерлĕ ВАЗ-2106 автомашина салонне юрăхлă ключсем тупса кĕнĕ. Урамри автомашинăран "Атланта АТ-87" автомагнитола, аккумулятор тата 5 свеча пралукĕ вăрласа тухнă.

Сентябрĕн 10-мĕшĕнче 12 сехетсенче Отарккă ялĕн обществăлла транспортăн чарăнăвĕнче Чуманкасси ялĕнче çуралнă, Отарккă ялĕнче пурăнакан 17 çулхи яш 12 çулхипе вăй виçме шутланă. Вăйĕ вара аслăраххинех ытларах пулнă çав. Чуманкасси шкулĕнче 8-мĕш класра вĕренекен, Исетерккĕ ялĕнче пурăнакан арçын ачанне SONY ERICSSON Z 530 маркăллă кĕсье телефонне вăрлать.

Çакăнтах инкек тӳснĕскерпе Анаткас ялĕнче çуралнă, Чуманкасси ялĕнче пурăнакан 11-мĕш класс арçын ачи паттăрланма пăхать. Унтан сăра тапăнса ыйтать, хĕнет. 8-мĕш класс ачине тĕп больницăн хирурги уйрăмне тĕрлĕ сурансемпе илсе çитерме тивет. Çапла вара икĕ çăвăр автан тĕлĕшпе РФ УК 161 ст. 2 пайĕпе тата 163 ст. 2 пайĕпе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать. Çапларах ачасем ăстăн пухаççĕ иккен Чуманкасси шкулĕнче.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Ĕç коллективĕсенче

# Таврара ырăпа кăна пĕлеççĕ

Москакасси ял тăрăхĕнче тĕрлĕрен организаци ĕçлет. Çавна май вырăнти халăха валли ĕç вырăнĕсем тупăнсах пыраççĕ.

Шăпах ĕнтĕ çак организацисенчен пĕринче, "Сежина" пельмень цехĕнче пулма тӳр килчĕ агитбригада ушкăнĕн.

Çак пельмень цехĕнчи ĕçченсем 2002 çултанпа тăрăшса ĕçлесе пыраççĕ. Унăн ертӳçинче Н.Г. Прокопьева тăрăшать. Паянхи куна илсен, çак цехра ашран хатĕрленĕ 62 тĕрлĕ апат-çимĕç туса тĕрлĕ çĕре ăсатаççĕ. Вĕсен пельменне яланах юратса çиеççĕ. Шупашкарта е районта, пур çĕрте те ырăпа асăнаççĕ. Столовăйсене кĕрсен те "Москакасси пельменĕ пур-и?" – тесе ыйтнине илтме пулать. Кашни кун çак цехран 100-150 кг ашпăш продукцийĕ Шупашкарти, Çĕнĕ Шупашкарти, Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти магазинсене ăсанать.

Акă вĕсем нумай çул тăрăшса ĕçлекенсем: Л.Г. Крылова, О.В. Кондратьева, Т.А. Мокеева, Р.Л. Маринкина, В.З. Богданова, И.А. Куликова т.ыт.те. Пĕтĕмпе кунта 12 хĕрарăм тата 1 арçын тăрăшать. Чăнах та вĕсен ылтăн аллисем пельмень çупнă чухне выляса кăна тăраççĕ. Питĕ маттур хĕрсем вĕсем.

Вĕсен кăмăлне çĕклес тесе хамăр ушкăнпа концерт лартса патăмăр. Вĕсем те пирĕнпе хаваспах юрласа, ташласа савăнчĕç.

**Галина ГОЛУБЕВА,**
**хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи.**

Акция

# Приглашаем предпринимателей

С 1 октября по 12 ноября 2007 года Чувашское отделение Сбербанка России проводит акцию "Дни малого бизнеса". Моргаушское отделение № 7034 приглашает предпринимателей района принять активное участие в осенней акции. В рамках акции предпринимателям будут предложены специальные условия по кредитованию и тарифы за прием наличных, а также возможность бесплатного открытия расчетного счета и установки системы «Клиент-Сбербанк». В отделении Сбербанка России ежедневно будут принимать всех клиентов специалисты, ответят на интересующие вопросы по кредитованию и расчетно-кассовому обслуживанию, помогут решить возникающие проблемы.

**Моргаушское отделение.**

# Тав тăватпăр

Авăн уйăхĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çывăх тăванăмăр, Катькасра пурăнакан Владимир Георгиевич Юлин, йывăр чирлесе ӳкрĕ. Юн пусăмĕ анса кайнипе тата тăн çухатнăскерне "Районти тĕп больница" муниципаллă сывату учрежденине илсе çитертĕмĕр. Реанимаци уйрăмĕнче ĕçлекенсем пире тивĕçлипе кĕтсе илсе тата вăхăтра пĕлтерĕшлĕ ĕçсем туса ирттерсе пире шанăç пачĕç. Вăхăтра тĕрĕс диагноз лартса сывату процесне пĕлсе йĕркелесе тăванăмăра вилĕмрен çăлса хăварчĕç. Паян пирĕн тăванăмăр хăйне лайăх туйнишĕн эпир реанимаци уйрăмĕн ертӳçине И. Ярдыкова, Г. Кузнецовапа И. Воробьев врачсене тата С. Куликова, В. Паладьева, В. Гордеева, И. Петрова, Э. Яковлева, Л. Николаева медсестрасене тав тăватпăр. Çак ĕçченсем хăйсен ĕçĕнче чăн-чăн ăстасем пулни сывлăха сыхлас наци проекчĕ сулмаклă утăмсемпе аталанасса шантарать. Çапла пултăрччĕ те.

**Тăванĕсем.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Закупаю свинину. Тел.: 8-927-854-96-32, 2-13-77. 8-8.**

**Продаю: доски хвойные, березовые, брус, подтоварник, штакетник, дрова-обрезки (дешево). Тел.: 8-905-345-31-09. 1-5.**

**Лаша урапи сутатăп, çăмăл машина урàписенчен. Тел.: 8-927-994-50-10.**

**Работа в избирательной кампании. Тел.: 8-927-863-67-80, 8-902-359-01-71.**


**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:28 02 01:0110, местоположение: участок находится примерно в 70 м по направлению на юго-восток от ориентира ток, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район,Шатьмапосинское сельское поселение, д. Торханы, площадью 5500 кв. м.**

**Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Участник долевой собственности Яртеев Меркурий Федорович, 26.05.1938 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, деревня Куськино, ул. Солнечная Поляна, д. 28, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК «Хлебороб», расположенного в поле № 3 общей площадью 1,34 га.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**

**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**

**2. Яртееву Меркурию Федоровичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, деревня Куськино, ул. Солнечная Поляна, д. 28.**

**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участница долевой собственности Яртеева Светлана Николаевна, 07.04.1943 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, деревня Куськино, ул. Солнечная Поляна, д. 28, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК «Хлебороб», расположенного в поле № 3 общей площадью 1,34 га.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**

**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**

**2. Яртеевой Светлане Николаевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, деревня Куськино, ул. Солнечная Поляна, д. 28.**

**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ**
**МУРКАШ ТАТА ЭЛĔК РАЙОНĔСЕНЧИ**
**ÇАР КОМИССАРИАЧĔ**
**контрактпа çар службине йышăнать:**

– типĕ çĕр çинчи çарсене, сывлăш çар десанчĕн вăйĕсене, тинĕс çар флотне, чикĕ хуралне.

Граждансен суйласа илнĕ специальноçĕпе службăра тăма кăмăл пуррине, хăш çарта тата служба вырăнне (регион) шута илеççĕ. Аслă пĕлӳ илнĕ, анчах та призывпа службăра пулман граждансем (ФЗ № 53 от 1998 г.) те, запасри граждансем те контрактпа службăна кайма пултараççĕ.

**ÇАР СЛУЖБИН УСЛОВИЙĔСЕМ:**

1. Контракт 3 çуллăх.
2. Пĕтĕм соцпакет.
3. Ĕç укçи :

– типĕ çĕр çинчи çарсенче – уйăхне 10 пин тенкĕрен тытăнса;
– сывлăш-çар десанчĕн вăйĕсенче – уйăхне 12 пин тенкĕрен тытăнса;
– тинĕс-çар флотĕнче – уйăхне 15 пин тенкĕрен тытăнса;
– чикĕ хуралĕнче – уйăхне 18 пин тенкĕрен тытăнса;
– кунпа пĕрлех ытти тӳлевсем те.

**ХУШМА ÇĂМĂЛЛĂХСЕМ:**

– контракт тунă чухне пĕр хут паракан укçа пособийĕ;
– талăксерен 3 хут тӳлевсĕр çитерни;
– тумтирпе тивĕçтерни;
– çулсерен укçан 2 оклачĕ чухлĕ пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшни;
– çулталăк итогĕсемпе 3 оклад чухлĕ пĕр хутчен укçан тӳлени;
– апат-çимĕç паекĕшĕн уйăхсерен тӳлекен компенсаци;
– 30 талăкран тытăнса 50 талăк таран тĕп отпуск;
– отпуска каякан вырăна çитме тата каялла килме каякан укçатенкĕ тăкакĕсене саплаштарни;
– пурăнма вырăн тупса пани;
– санаторисемпе курортсенче сипленме тата канма кайма условисем туса пани;
– кашни кварталта тӳлекен преми.

**ЫЙТУСЕМПЕ ÇАК АДРЕСПА ПЫМАЛЛА:**
**Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕ, тел.: (8-241)-2-13-50; 2-13-84; 2-17-01.**


**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3480.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 09.10.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.